РЕСПУБЛИКАНСКИЙ ОЛИМПИАДНЫЙ ЦЕНТР © РЕСПУБЛИКАНСКИЙ ОЛИМПИАДНЫЙ ЦЕНТР РЕСПУБЛИКАН

ЭКЗЕМПЛЯР № 3

***Задания** для муниципального этапа республиканской предметной олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе. 2024/2025 учебный год. 7 класс*

*Время проведения – 150 минут*
*Максимальный балл – 50*

Текста вулăр та хушнă ĕçсене тăвăр.

*Ытла та хÿхĕм Чăваш çĕр-шывĕ! Вăл çав тери хитре улăхсемпе, вăрмансемпе пуян. Вăрмансенче тĕрлĕ йывăç ÿсет: юман çăка ăвăс хыр йĕлме шĕшкĕ вĕрене йăмра хурама чăрăш. Çут тĕнчере тăван çĕртен хакли тата мĕн пур-ши?*

1. Текста чарăну паллисене тĕрĕс лартса çырса илĕр. Запятойсене мĕншĕн лартнине ăнлантарăр.
2. Пĕр ăнлавах пĕлтерекен, анчах тĕрлĕрен илтĕнекен сăмахсене мĕн теççĕ? Çавăн пек сăмахсем текстра пур-и? Текстран вĕсене çырса илĕр, вырăсла куçарăр.
3. Текстран йывăç ячĕсене çырса илĕр, вырăсла куçарăр.
4. Мĕнле пуплев пайне глагол теççĕ? Текстра глагол тупăр та унăн кашни пĕлтерĕшлĕ пайне (тымарне, аффикссене) палăртса тухăр. Сăмах тĕпне кăтартăр.
5. Текстран сасă шучĕ сас палли шутĕнчен ытларах сăмаха(сене) çырса илĕр. Çырса илнĕ сăмахсенче миçе сас палли, миçе сасă пулнине палăртăр.
6. Ваттисен сăмахĕсене вĕçлĕр.

   *Нумай пĕтĕ, сахал çитĕ, ...?*
   *Çĕрте малта пыр, ....*
   *Этем пурте пĕр: вырăс та, ....*
   *Халăх хушшинче упа та ....*
   *Ырă çынна ырă ятпа асăнаççĕ, ....*
7. *Çÿл ту çинче вĕт хăва* тупмалли юмахăн тупсăмне тупăр.
8. Мĕн вăл эпиграмма?
9. Çак йĕркесем хăш хайлавран? Авторĕн хушамачĕпе ятне çырăр. Йытă ячĕ мĕнле-ши?

   *Пурăнать Тури Юманлăх*
   *Салинче Петров Атнер…*
   *Пур ун йытă*
   *(… ятлă!),*
   *Шурă юр пек шурăскер.*
10. „Кам вăл Çеçпĕл?“ темăна уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар хайлав çырăр.

РЕСПУБЛИКАНСКИЙ ОЛИМПИАДНЫЙ ЦЕНТР © РЕСПУБЛИКАНСКИЙ ОЛИМПИАДНЫЙ ЦЕНТР РЕСПУБЛИКАН

ЭКЗЕМПЛЯР № 3

***Задания** для муниципального этапа республиканской предметной олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе.*
*2024/2025 учебный год. 8 класс*

*Время проведения – 150 минут*
*Максимальный балл – 50*

Текста вулăр та хушнă ĕçсене тăвăр.

*Пирĕн республикăра вăрмансем те нумай. Унта тĕрлĕ йышши тискер кайăк чылай пурăнать. Атăлпа Сăр тăрăхĕнчи вăрмансенче эсĕ мулкачпа (тилĕ) пăшипе пăлана упапа кашкăра пакшапа арлана хир сыснипе çӳлевĕçе асăрхама пултаратăн.*

1. Текста чарăну паллисене тĕрĕс лартса, скобкăри сăмаха пару падежĕнче лартса çырса илĕр. Запятойсене мĕншĕн лартнине ăнлантарăр.
2. Пĕр ăнлавах пĕлтерекен, анчах тĕрлĕрен илтĕнекен сăмахсене мĕн теççĕ? Çавăн пек сăмахсем текстра пур-и? Текстран вĕсене çырса илĕр, вырăсла куçарăр.
3. Текстран тискер кайăк ячĕсене çырса илĕр, вырăсла куçарăр.
4. Текстра 2-мĕш сăпатри глагола тупăр та унăн кашни пĕлтерĕшлĕ пайне (тымарне, аффикссене) палăртса тухăр. Сăмах тĕпне кăтартăр.
5. Скобкăри япала ятне пару падежĕнче тепĕр хут çырăр, мĕншĕн апла çырнине ăнлантарăр
6. Ваттисен сăмахĕсене вĕçлĕр.
   *Ыр ут хыççăн ....*
   *Ятлă çынна ....*
   *Ыр лашана пĕр пушă, ....*
   *Ялан ăспа çӳресен ….*
   *Юлташсăр çын ….*
7. *Ват асаттен вăрманĕнче питĕ тарăн нӳхреп пур* тупмалли юмахăн тупсăмне тупăр.
8. *Мĕн вăл элеги?*
9. Çак йĕркесем хăш хайлавран? Авторĕн хушамачĕпе ятне, ашшĕ ятне, псевдонимне çырăр.
   *Çĕр чăмăрĕн пĕр чĕптĕмĕ эпир,*
   *Тымарсемпе тĕнче кăкне тытатпăр.*
10. „Кам вăл Çеçпĕл?“ темăна уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар хайлав çырăр.

*P71845A0785*

РЕСПУБЛИКАНСКИЙ ОЛИМПИАДНЫЙ ЦЕНТР © РЕСПУБЛИКАНСКИЙ ОЛИМПИАДНЫЙ ЦЕНТР РЕСПУБЛИКАН

ЭКЗЕМПЛЯР № 3

***Задания** для муниципального этапа республиканской предметной олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе. 2024/2025 учебный год. 9 класс*

*Время проведения – 180 минут*
*Максимальный балл – 50*

Текста вулăр та хушнă ĕçсене тăвăр.

*Чăваш çĕр-шывне анлă улăхсем симĕс вăрмансем юхан шывсем таса çăл куçсем хитрелетеççĕ. Пирĕн тавралăх кайăксемпе те пуян. Вăрмансемпе уйсемпе çӳренĕ чух эсĕ хурчка тăрна пăрчăкан шăнкăрч ула такка тата ытти кайăксене асăрхама илтме пултаратăн. Вĕсем пурте пирĕн таврана илемлетсе тăраççĕ.*

1. Текста чарăну паллисене тĕрĕс лартса çырса илĕр. Запятойсене мĕншĕн лартнине ăнлантарăр.

2. Пĕр ăнлавах пĕлтерекен, анчах тĕрлĕрен илтĕнекен сăмахсене мĕн теççĕ. Çавăн пек сăмахсем текстра пур-и? Текстран вĕсене тĕп формăна лартса çырса илĕр, вырăсла куçарăр.

3. Текстран кайăк ячĕсене çырса илĕр, вырăсла куçарăр.

4. Текстра 2-мĕш сăпатри глагола тупăр та унăн кашни пĕлтерĕшлĕ пайне (тымарне, аффикссене) палăртса тухăр. Сăмах тĕпне кăтартăр.

5. Текстран сасă шучĕ сас палли шутĕнчен ытларах сăмаха(сене) çырса илĕр. Çырса илнĕ сăмахсенче миçе сас палли, миçе сасă пулнине палăртăр.

6. Ваттисен сăмахĕсене вĕçлĕр.

*Саккăрăн авăн çапма лайăх, ....*
*Пĕр çын утать – йĕр юлать, ....*
*Пĕри вăрмана, ....*
*Пур пĕрле, ....*
*Вăрлаканăн пĕр çылăх, ....*

7. *Çутă кӳлĕ çинче çӳллĕ ту* тупмалли юмахăн тупсăмне тупăр.

8. Мĕн вăл ода?

9. Çак йĕркесем хăш хайлавран? Авторĕн псевдонимне çырăр, куçаруçине палăртăр.

*Вĕреннĕ çынсем пур ĕçре те хастар,*
*Пĕлӳсĕр этем кӳрес çук пархатар.*
*Çӳрет халăхра кун пирки пĕр сăмах:*
*„Пачах вĕренмен тĕк – вăл чыссăр ухмах“.*

10. „Кам вăл Çеçпĕл?“ темăна уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар хайлав çырăр.

*P71845A0785*

РЕСПУБЛИКАНСКИЙ ОЛИМПИАДНЫЙ ЦЕНТР © РЕСПУБЛИКАНСКИЙ ОЛИМПИАДНЫЙ ЦЕНТР РЕСПУБЛИКАН

ЭКЗЕМПЛЯР № 3

***Задания** для муниципального этапа республиканской предметной олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе. 2024/2025 учебный год. 10 класс*

*Время проведения – 180 минут*
*Максимальный балл – 50*

Текста вулăр та хушнă ĕçсене тăвăр.

*Чăваш çĕр-шывĕ урлă анлă та пысăк Атăл сарлака Сăрпа çаврăнса юхакан Çавал Кĕтне Энĕш тата ытти юхан шывсем юхаççĕ. Вĕсен ытарма çук çыранĕсенче чăваш ялĕсемпе хулисем вырнаçнă. Ялĕсем вара хитре пуян вăрман пекех йывăçлă пахчаллă. Ачасем çу каçипех юхан шывсенче шыва кĕреççĕ ишме вĕренеççĕ пулă тытаççĕ.*

1. Текста чарăну паллисене тĕрĕс лартса çырса илĕр. Запятойсене мĕншĕн лартнине ăнлантарăр.
2. Пĕр ăнлавах пĕлтерекен, анчах тĕрлĕрен илтĕнекен сăмахсене мĕн теççĕ. Çавăн пек сăмахсем текстра пур-и? Текстран вĕсене çырса илĕр, вырăсла куçарăр.
3. Текстран юхан шыв ячĕсене çырса илĕр, вырăсла куçарăр.
4. Текстра иртнĕ причасти тупăр та унăн кашни пĕлтерĕшлĕ пайне (тымарне, аффикссене) палăртса тухăр. Сăмах тĕпне кăтартăр.
5. Текстран сасă шучĕ сас палли шутĕнчен ытларах сăмаха(сене) çырса илĕр. Çырса илнĕ сăмахсенче миçе сас палли, миçе сасă пулнине палăртăр.
6. Ваттисен сăмахĕсене вĕçлĕр.

*Вăрă пуçĕ çинче ....*
*Тăшман йăпăлтатса хур тăвать, ....*
*Пĕлмесен – пĕр сăмах, ....*
*Тухман çын тухсан ….*
*Çын валли шăтăк ан чав, ….*

7. *Пĕр май пăхсан – курăнать, тепĕр май пăхсан – курăнмасть* тупмалли юмахăн тупсăмне тупăр.
8. Мĕн вăл халал? Эсир мĕнле паллă çыннăн халалне шкулта вĕреннĕ? Халал ятне, авторăн ятне, ашшĕ ятне, хушаматне çырăр.
9. Çак йĕркесем хăш хайлавран? Авторне палăртăр.

*Ман пурлăхăм чух, пин ылтăнăм çук,*
*Нумай кирлĕ мар тăван пĕрле чух.*
*Нумай та пĕтет, сахал та çитет.*
*Тату пурнăça элле мĕн çитет?*
*Пурри вăл – пĕрле, çукки – çурмалла,*
*Тата, тăвансем, мĕнле пулмалла?*

10. „Кам вăл Çеçпĕл?“ темăна уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар хайлав çырăр.

*P71845A0785*

РЕСПУБЛИКАНСКИЙ ОЛИМПИАДНЫЙ ЦЕНТР © РЕСПУБЛИКАНСКИЙ ОЛИМПИАДНЫЙ ЦЕНТР РЕСПУБЛИКАН



***Задания** для муниципального этапа республиканской предметной олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе.*
*2024/2025 учебный год. 11 класс*

*Время проведения – 180 минут*
*Максимальный балл – 50*

Текста вулăр та хушнă ĕçсене тăвăр.

*Чăваш Республикин тĕп хули – Шупашкар. Вăл республикăри чи ватă хула. Ытти ватă хуласен шутне Улатăр Çĕрпӳ Сĕнтĕрвăрри кĕреççĕ. Республикăра тата çакăн пек хуласем пур: Çĕнĕ Шупашкар Çĕмĕрле Етĕрне Куславкка тата Канаш.*

*Çӳллĕ тĕкме е чул хӳме тытса çавăрнă çынсем пурăнакан вырăна ĕлĕк хула тенĕ. Ун чухне хулара ялан тенĕ пекех ытларах вырăссем пурăннă. Вĕсем тĕрлĕ япала ăсталанă суту-илӳ тунă. Шупашкар Çĕрпӳ Етĕрне Сĕнтĕрвăрри хулисем вырнаçнă вырăнта авал чăваш ялĕсем пулнă.*

1. Текста чарăну паллисене тĕрĕс лартса çырса илĕр. Запятойсене мĕншĕн лартнине ăнлантарăр.

2. Пĕр ăнлавах пĕлтерекен, анчах тĕрлĕрен илтĕнекен сăмахсене мĕн теççĕ. Çавăн пек сăмахсем текстра пур-и? Текстран вĕсене çырса илĕр, вырăсла куçарăр.

3. Текстран пайăр ятсене çырса илĕр, вырăсла куçарăр.

4. Текстра япала ячĕ çумне сăмах тăвакан икĕ аффикс хушăнса пулнă сăмаха тупăр та унăн кашни пĕлтерĕшлĕ пайне (тымарне, аффикссене) палăртса тухăр. Сăмах тĕпне кăтартăр.

5. Текстран сасă шучĕ сас палли шутĕнчен ытларах сăмаха(сене) çырса илĕр. Çырса илнĕ сăмахра(сенче) миçе сас палли, миçе сасă пулнине палăртăр.

6. Ваттисен сăмахĕсене вĕçлĕр.

*Паракантан ил, ….*
*Кĕр пуçтарать, ….*
*Касма çăмăл, ….*
*Вăрман пек пуянни çук, ….*
*Çĕвĕçĕн сăхманĕ çĕтĕк, ….*

7. *Пĕр тăвайккинче икĕ шăтăк алтăр ларать* тупмалли юмахăн тупсăмне тупăр.

8. Мĕн вăл пехил?

9. Çак йĕркесем хăш хайлавран? Авторăн ятне, ашшĕ ятне, хушаматне, псевдонимне палăртăр.

*Тăван çĕршыв, е сан та вăю пĕтрĕ?*
*Е чăваш чĕлхин хăват çĕтрĕ?*
*Е ют чĕлхесем ӳснĕ майĕ*
*Чăваш чĕлхи çĕтсе, пĕтсе кайĕ?*
*Е чăваш çынни, чăваш ялĕ*
*Сарлака çĕр çинчен çухалĕ?...*

10. „Кам вăл Çеçпĕл?“ темăна уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар хайлав çырăр.

ЭКЗЕМПЛЯР № 3